Çĕнтерӳ кунĕ ячĕпе саламлатпăр!

ХЫПАР

Чăваш ачисен хаçачĕ

# Тантăш

6+

17 (4483) №, 2016, май (çу), 5
1931 çулхи январĕн (кăрлачăн) 12-мĕшĕнче тухма тытăннă

Хакĕ ирĕклĕ
Индексĕ: 54802

ТУСЛĂ КИЛ-ЙЫШ

## Егоровсен кашни ачи – ахах пĕрчи



**Вăрмар районĕнчи Аслă Чак шкулне кĕрсен тӳрех стена çинчи стенд куç тĕлне пулчĕ. Унта вĕренӳ отличникĕсен ячĕсемпе хушамачĕсем çырăннă. Черетпе вулатăп.**

Чим, Егоров хушамат нумай кунта! «Улатăр районĕнчи Кивĕ Эйпеç шкулĕнче çавнашкал ӳкерчĕк курнăччĕ. Казанцевсем анлă сарăлнă унта. Кашни класрах çак хушаматлă темиçе ача вĕренет. Урамра е почтăра, клубра е библиотекăра тĕл пулаканăн та хушамачĕ Казанцев пулнине пĕлсен питех те тĕлĕннĕччĕ. Аслă Чакра вара Егоровсем йышлă-мĕн», – тетĕп хастарсен сăнӳкерчĕкĕсене тимлесе пăхнă май.

– Çак сумлă йышра Владислав Анатольевичпа Ирина Михайловна Егоровсен пилĕк ачи те – Елена, Наталья, Тимофей, Антон, Сусанна – пур. Пĕрремĕш класа каякан Архип та кĕçех çак Хисеп хăми çинче пулĕ. Çапла, улттăн вĕренеççĕ Егоровсем шкулта. Пурте сăпайлăскерсем, отличниксем, чи нумай кĕнеке вулаканскерсем, спортсменсем, юрра-кĕвве юратакансем, хитре ӳкерекенсем, олимпиада-конкурс çĕнтерӳçисем... Пĕр сăмахпа пур енлĕ талантлă ачасем, шкула çӳллĕ шайра тытакансем, – ăнлантарчĕ Ирина Леонардовна Яковлева педагог эпĕ тĕлĕнсе шухăша путнине кура.

Унăн сăмахĕсем «анратсах» ячĕç. Ара, алăри пӳрне те пĕр пек мар та, пĕр çемьери ачасем те пĕр евĕр пулмаççĕ-çке. Кунта авă Егоровсем пĕрешкел тăрăшуллă та маттур пулни тĕлĕнтермеллипех тĕлĕнтерчĕ!

– Кунсăр пуçне Егоровсен улттăри Марфа, тăваттăри Петя, çулталăкри Клариса пур. Пĕчĕкскерсем халех тăрăшулăхĕпе палăраççĕ. Шкула çӳреме тытăнсан вĕсем те пур çĕрте те хастар пуласса пĕрре те иккĕленместпĕр. Çавăн пек туслă тăхăр ача çитĕнтереççĕ те Владислав Анатольевичпа Ирина Михайловна. Чун тĕпренчĕкĕсемшĕн нимĕн те шеллемеççĕ. Мĕн кирлине йăлтах туянса параççĕ. Хĕллесерен вара хăйсемех конькипе ярăнма пăр шăнтаççĕ, йĕлтĕрпе ярăнма уя тухаççĕ. Егоровсем ялта ятлă, сумлă çынсем, ачисене те тĕрĕс воспитани парса çирĕп ура çине тăратма ĕмĕтленеççĕ, – вĕçĕмсĕр калаçса парать хастар педагог.

...Ман умра – ултă ача. Чăн та, ытлата сăпайлăскерсем. Вĕсенчен ăшăлăх, ырăлăх тапса тăнине чунпа туятăп. Çемьере чи асли – тăххăрмĕш класра вĕренекен Лена. Шкулта вăл шăллĕсемпе йăмăкĕсемшĕн анне вырăнĕнчех. Пĕр-пĕр ĕç пурнăçланă чухне унран сĕнӳ-канаш ыйтаççех кĕçĕннисем.

***Луиза ВАСИЛЬЕВА.***

Вăрмар районĕ,
Аслă Чак шкулĕ.

Тема тăсăмĕ 3-мĕш стр.

**Çырăнтару–2016**

**2016 çулăн II çурринче илсе тăмашкăн "ХЫПАРА" – 736,02 тенкĕпе, "ХЫПАР-эрнекуна" – 338,34 тенкĕпе, "ТАНТĂША" – 261,84 тенкĕпе, "ТЕТТЕ" журнала – 145,20 тенкĕпе, "САМАНТ" журнала 182,94 тенкĕпе кашни çыхăну уйрăмĕнчех çырăнтараççĕ**

# Хамăра шансан...



«Сирĕн шкулта спортсменсем пур-и?» – тесе ыйтсан вĕрентекенсем тӳрех тăваттăмĕш «б» класра вĕренекен Вика Александровăпа Маша Васильевăна палăртрĕç.

Вĕсем «Сывă кĕлеткере – сывă чун» каларăша тĕпе хураççĕ. Спортăн тĕрлĕ енĕпе туслашма ĕлкĕрнĕ ĕнтĕ маттурскерсем. Йĕлтĕрпе, конькипе е çуран чупса чылай çитĕнӳ тăваççĕ. «Раççей йĕлтĕр йĕрĕ», «Наци кросĕ» тата ытти ăмăртура çулсерен палăраканскерсене Наталия Петровна Кузьмина физкультура учителĕ хатĕрлет. Хĕрачасем унран тĕслĕх илсе хавхаланаççĕ ахăртнех. Наталия Петровна – йĕлтĕр спорчĕн СССР спорт мастăрĕ çес мар, ытти сумлă ята тивĕçнĕ спортсмен та. Çак профессире тăрăшнă вăхăтра миçе ачана спортпа туслашма пулăшман-ши вăл? Машăпа Викăна та Наталья Петровна йĕлтĕр сырсан пĕрремĕш утăмсем тума хăнăхтарнă.

– Малтанах йĕлтĕрпе çӳреме йывăртарахчĕ. Майĕпен хама çирĕпрех тытма вĕренсе çитрĕм, – аса илет Вика йăл кулса.

Пĕрремĕш ăмăртăвĕ те куçĕ умĕнчех-ха унăн. Вăл А.И. Тихонов ячĕллĕ ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн йĕлтĕр базинче иртнĕ. «Çуркуннехи тумла» тупăшура хĕрача виççĕмĕш тухнă. Çакă ăна малашне 1-мĕш вырăн çеç çĕнсе илме хистенĕ. Чăнах та халĕ кашниччех ăмăртусенчен Вика çĕнтерӳпе таврăнса ашшĕпе амăшне, вĕрентекенсемпе тренера савăнтарать.

Вăл чупса тухнă чи инçе дистанци – виçĕ çухрăм. Ăнтăлуллăскер ăна пĕр чăрмавсăрах, çăмăллăн парăнтарнă.

– Йĕлтĕр спорчĕпе туслашнă хыççăн хама вăй-хал хушăннине туйрăм, тӳсĕмлĕрех пулма та хăнăхрăм, – тет хĕрача çирĕппĕн.

Телевизорпа тăтăшах биатлон, йĕлтĕрпе чупнине, Олимп вăййисене пăхаканскер:

– Манăн та çак паллă спортсменсем пекех пулас килет-çке. Малтан – Раççей, кайран тĕнче чемпионкин ятне тивĕçме ĕмĕтленетĕп, – шухăшла çунатланать. – Эпĕ ĕненетĕп: хама шансан йăлтах пурнăçланĕ.

Маша та тантăшĕ пекех йĕлтĕр спорчĕпе туслă. Унсăр пуçне конькипе ярăнма кăмăллать.

«Наци кросĕ – 2013» ăмăртура вăл виççĕмĕш вырăн йышăнса хăйĕн пĕрремĕш медальне çĕнсе илнĕ. Еплерех хăпартланнă ун чухне! Мала тухасси пирки ĕмĕтленме те пултарайманскер призерсен йышне кĕнĕ-çке.

Шăпах çак çитĕнӳ ăна спортпа çывăхрах туслашма хистенĕ. Кунсерен тренировкăна çӳрени те усă кӳнине палăртать Маша. «Раççей йĕлтĕр йĕрĕ – 2015» ăмăртура 1-мĕш тухса çакна çирĕплетсе панă вăл. Çил пек вĕçтерсе пынă чухне хăрах йĕлтĕрĕ кĕтмен çĕртен уринчен вĕçерĕнсе кайни те пысăк чăрмав кӳмен хĕрачана – пăтăрмаха йĕркелесе вăл каллех малалла ыткăннă. Хастарлăх, мал ĕмĕтлĕх, çĕнтерӳ туйăмĕ тапса тăрать унра.

Тантăшсем спортри çитĕнӳсемпе çеç лăпланса лармаççĕ, ытти çĕрте те пултарулăхĕпе палăрма тăрăшаççĕ. Иккĕшĕ те искусствăсен шкулĕнче ташă ушкăнне çӳресе ăсталăхне аталантараççĕ.

– Пушă вăхăтра эпир пĕр-пĕринпе тĕл пулса тĕрлĕ япаларан тем те пĕр ăсталама юрататпăр. Квилинг мелĕпе хатĕрленĕ открыткăсем, пĕчĕк куруппасем тата ытти илемлĕ япала нумай пирĕн. Вĕсене тантăшсемпе çывăх çынсене парнелесе савăнтаратпăр, – хăпартланса калаçаççĕ туссем.

Шкулти пур мероприятирен те юлманскерсем ертӳçĕ рольне те ăста калăплама хăнăхнă. Вĕрентекенсем хĕрачасене мухтаса пĕтереймеççĕ, тĕрлĕ енлĕн хавхалантараççĕ.

– Машăпа Вика – шкулăн пĕчĕк çăлтăрĕсем. Спортра малтанхи утăмсем çеç тăваканскерсене малашне пысăк çитĕнӳсем кĕтнинче иккĕленместĕп. Ашшĕпе амăшĕ те питĕ пулăшаççĕ, хавхалантараççĕ тĕпренчĕкĕсене. Çакă ачашăн питех те пĕлтерĕшлĕ-çке. Чи кирли вара хĕрачасенче ăнтăлу пурри. Тренировкăсене те сиктермеççĕ, «Пирĕн вăхăт çук», – тесе каламан. Ăнăçу çеç сунас килет вĕсене, – терĕ Наталья Петровна пулас чемпионсене çупăрласа.

***Нина ЦАРЫГИНА.***

Шупашкар районĕ,
Çĕнĕ Лапсар пуçламăш шкулĕ.

# Чернобыль ахрăмĕ




Чернобыль синкерĕ – этемлĕх историйĕнчи питĕ хăрушă та хурлăхлă пулăм. Чи хăватлă техногенлă катастрофа 1986 çулхи ака уйăхĕн 26-мĕшĕнче Чернобыльти атом электростанцийĕн 4-мĕш блокĕнче пулнă. Сывлăшра вилĕмле хăрушлăх кăларакан япаласем çав тери нумай саланнă. Взрыв хыççăн кунта пачах урăх тĕнче хуçаланасси тӳрех паллă пулнă. 1 сехет иртсен йывăр лару-тăру хăрушлăхĕ уçăмлăнах курăннă, çынсем мĕн тумаллине те пĕлмен. Вырăнта пурăнакансене эвакуацилеме темшĕн никам та васкаман.

Ака уйăхĕн 26-мĕшĕнче ир-ирех Чернобыльти пур çула та шыв тата темĕнле ăнланмалла мар шурă япала хутăшĕ çавăрса илнĕ. Хулана милици ĕçченĕсем чылайăн пустараннă, анчах вĕсем нимĕн те туман, палăртнă вырăнсенче тăнă кăна. Пур çĕрте те çынсем, пĕчĕк ачасем çӳренĕ, чăтмалла мар шăрăх çанталăк тăнă. Çынсем пляжа, дачăна, пулă тытма кайнă, юхан шыв хĕрринче каннă... Мĕн тери хăрушлăха çакланнине çав вăхăтра пĕлмен-ха вĕсем.

Припять хулине эвакуацилесси çинчен тепĕр кунне кăна хушу кăларнă. Хулари çынсене автобуссемпе анăçалла ăсатнă. Çапла Припять самантрах мĕлке-хулана çавăрннă.

Этем йăнăшне пула çĕр çинче мĕн чухлĕ инкек сиксе тухать. Чернобыльте взрыв пулнăранпа 30 çул çитрĕ, анчах унăн ахрăмĕ паян та чылайăшне канăç памасть. Унти ĕçсене хутшăннă çынсен суранĕсем халĕ те лăпланмаççĕ.

Мĕнлерех-ха Чернобыль паян? Пуш-пушă та тискер, чăн-чăн мĕлке-хула... Хăрушăскер, хăйĕнпе пĕрле пин-пин çын пурнăçне пĕтерсе хунăскер... Этем явапсăрлăхĕн, тирпейсĕрлĕхĕн, айванлăхĕн чунсăр палăкĕ.

Атьăр-ха тимлĕхе нихăçан та çухатар мар. Кирек епле ĕç тăвас пулсан та ăна тĕплĕ пурнăçлар, темиçе хутчен те тĕрĕслер. Чернобыль синкерĕ этем тимсĕрлĕхне пулас сиксе тухнă-çке. Пĕчĕк йăнăш та пысăк инкек патне илсе çитерме пултарать-çке, çакна манар мар.

# Чи лайăх класс



Кашни вĕренӳ çулĕ вĕçĕнче Пушкăртстанри Чекмагуш районĕнчи Юмашри вăтам шкулта «Чи лайăх класс» конкурса пĕтĕмлетеççĕ. Унта класри ачасен вĕренӳри çитĕнĕвĕсене шута илеççĕ, общес-твăлла ĕçсене хутшăннине тата тĕрлĕрен конкурсри çитĕнĕве пăхаççĕ. Вĕренӳ çулĕ вĕçĕнче тунă пĕтĕмлетӳ тăрăх шкулти «Чи лайăх класс» ятне пĕлтĕр 10-мĕшĕнче вĕренекенсем çĕнсе илнĕччĕ. Çак çитĕнӳшĕн вĕсем Константин Ивановăн çуралнă çĕрне çитсе курнăччĕ. Кăçал вара çĕнтерĕве тивĕçнĕ ачасене шкул администрацийĕ республикăн тĕп хулине экскурси йĕркелесе пама шантарнă.

Халĕ çав ачасем 11-мĕш класра вĕренеççĕ ĕнтĕ. Ака уйăхĕн 24-мĕшĕнче вĕсем Ĕпхӳ хулине çитсе курчĕç, илемлĕ вырăнсемпе киленчĕç. Кинотеатртра «Экипаж» фильм курни, «Ботаника садĕнче» тата музейсенче çӳрени вĕсен асĕнче чылайăха сыхăнса юлĕ.

Вун пĕрмĕшсем килĕсене çĕкленӳллĕ кăмăлпа таврăнчĕç.

***Владимир ВАСИЛЬЕВ.***

Пушкăртстан,
Чекмагуш районĕ,
Юмаш шкулĕ.

**Чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекенсене, тăван культурăшăн тăрăшакансене**

**ПĔЛМЕ!**

Чăваш наци конгресĕ, Вĕренӳ институчĕ, «Хыпар» Издательство çурчĕн «Тантăш», «Тетте», «Самант» редакцийĕсем **çу уйăхĕн 12-мĕшĕнче** «Вĕренӳ, культура, хаçат-журнал» ыйтăвĕсемпе «çавра сĕтел» йĕркелеççĕ. Сӳтсе явнипе пĕрлех альтернатива çырăнтарăвĕн семинарĕ те иртет.

Тĕлпулу Пичет çуртĕнче, 7-мĕш хутри конференц-залра 15 сехетре пуçланать. Пирĕн адрес: **Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13-мĕш çурт.**

Кĕтетпĕр!

Тантăш
чăваш ачисен хаçачĕ

● УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

● ХАÇАТ ИНДЕКСĔ:
54802 - (çур çула) – Чăваш Республикинче

● Редакципе издатель адресĕ:
428019, Чăваш Республики, Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "Хыпар" Издательство çурчĕ" АУ техника центрĕнче калăпланă. "Чувашия" ИПК" АО типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Чăваш Республики, Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "ЧУВАШИЯ" ИПК" ДИРЕКТОРĔ:
Тел.: 64-24-01

● ДИРЕКТОР - ТĔП РЕДАКТОР
М.М.АРЛАНОВ

● ТЕЛЕФОНСЕМ
директор-тĕп редактор: 56-00-67
редактор, çырусемпе тата юнкорсемпе ĕçлекен пай: 28-83-86
шкул ачисен пайĕ: 28-85-69
спорт тата экологи пайĕ: 56-11-80
право, кăмăл-сипет пайĕ: 28-83-89
факс: (8352) 28-83-70
бухгалтери: 28-83-64

● РЕДАКТОР
В.ФЕДОРОВ

● НОМЕР ВУЛАВÇИ
Н.ЦАРЫГИНА

● КАЛĂПЛАВÇĂ
Н.ПЕТРОВА

● ЭЛЕКТРОН АДРЕС:
e-mail: tantas@list.ru

● ТИРАЖ
1290 экз.

● ЗАКАЗ
№ 1493
Пичете çу уйăхĕн 4-мĕшĕнче алă пуснă.

● ПИРĔН САЙТ:
www.hypar.ru

Газета «Тантăш» («Ровесник») зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций (Роскомнадзор) – свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ТУ21-00306 от 10.12.13 г.

Ⓟ паллăпа реклама материалĕсене палăртнă

Пичете графикпа 15 сехетре алă пусмалла, 14 сехет те 00 минутра алă пуснă.

1-мĕш стр.

# Егоровсен кашни ачи – АХАХ ПĔРЧИ



### Лена сочиненийĕнче — Тимофей

Егоровсен аслă хĕрĕ Лена юратнă шăллĕсемпе йăмăкĕсем пирки сехечĕ-сехечĕпе калама пултарать. Шкулта ирĕклĕ темăпа çырнă сочиненисенче те юратнă çемйине сăнарлать. Ку хутĕнче вăл хăй ĕçне Тимофея халалланă.

«Пире, пĕчĕк чухне, сас паллисем палламан вăхăтра аннесем илемлĕ ӳкерчĕклĕ кĕнекесем илсе параççĕ. Вăхăт тупса унти юмах-халаппа, сăвă-калавпа паллаштарма ӳркенмеççĕ.

Ӳсерехпе вара хамăрах унти сăнарсемпе «тĕл пулатпăр». Мĕн вуласа пĕлнине урамра тус-юлташа хăпартланса каласа кăтартатпăр, вĕсене те кĕнекепе туслашма сĕнетпĕр.

Манăн юратнă шăллăм та авă кĕнеке ăшнех путнă тесе калас килет. Вăл вуламасăр пĕр кун та пурăнаймасть. Уйрăмах историлле романсене, вăрçă çинчен çырнă калавсене чунтан кăмăллать. Космоса сăнлакан материалсемшĕн вара каçса каять. Чи интересли – унта мĕн çырнине йăлтах астуса юлать. Тĕлĕнетпĕр вара унран, ăмсанатпăр та. «Кĕнекене пулах вĕренӳре çăмăл мана, ăс-тăна çирĕплетет-çке вăл. Ахальтен мар тĕрлĕ олимпиада-конкурсра çитĕнӳ тăватăп», – тет тăтăшах мăнаçланса.

Тим мĕн чухлĕ роман, повеç, калав вуланине шутласа кăларма та çук. Пушă вăхăтра яланах унăн аллинче кĕнеке. Юратнă авторĕ – совет писателĕ Кир Булычев. Шăллăм Алиса Селезнева çинчен йăлтах вуласа тухнă. Çавăн пекех унти сăнарсене Пашка Гераскина, Селезнев профессора, Громозека, Механика, Говоруна чунтан юратать.

Пĕррехинче Антон Макаренко паллă педагог хайлавне вулама пуçăннăскер çурçĕр иртнине те сиссе юлайман.

Ĕсчен Тим тасалăха юратать. Унăн пӳлĕмĕнче тирпейлĕ те хăтлă. Усăсăр ларма юратмансер час-часах Неонила Ивановна Степановăна пулăшма çӳрет. Пĕррехинче пĕччененех урамра юр хыракан кинемее курнă Тимофей. Çав тери хĕрхеннĕ ăна. Аллинчен кĕреçине илсе хăй ĕçе тытăннă. Çакăн хыççăн куллен çӳреме тытăнчĕ ун патне, паян та хаваспах васкать. Вутă çурма, шыв йăтма, пахча тасатма пĕрре те ӳркенмест вăл. Тепĕр чухне Антон шăллăм та каять пĕрле. Эх, савăнать вара Неонила аппа! Хайхисене пурнăçра ыррине сунса: «Малашне те шкулта лайăх вĕренсе аçу-аннӳне, тăванусене, вĕрентекенсене савăнтарăр. Пурте сирĕнпе мăнаçланччăр», – тет ăшпиллĕн.

Ултăмĕш класра ăс пухакан Тимофей та вĕренӳре чи маттуррисенчен пĕри, спортра та сатур. Тĕрĕссипе, кирек ăçта та пултарулăхĕпе палăрать. Авă, юрă-кĕвĕ тĕнчине те путнă вăл.

Ĕмĕчĕ пысăк шăллăмăн. Шкултан вĕренсе тухсан Хусанти авиаци институтĕн студенчĕ пулас тĕллевпе пурăнать. Самолетсен вĕçевĕпе çыхăннă професси килĕшет-çке ăна. Ума лартнă тĕллеве яланах пурнăçлама хăнăхнăскер, унăн ĕмĕчĕ яр уççăн усăласса чунтан ĕненетпĕр эпир.

Тим пирки нумай ыррине калама пулать. Çапах та, пĕр сăмахпа каласан, манăн шăллăм чи маттурри. Эпир унпа пурте мăнаçланатпăр, çавăн пекех юрататпăр та».

Ленăн сочиненине лайăххисен шутне кĕртрĕç класра. Шкулта тухса тăракан «Шкул пăрахучĕ» хаçатра та кун çути курчĕ çак ĕç.

### Кайăкран та çӳлерех, ай, вĕçесчĕ!

Чăнах та, кунĕн-çĕрĕн летчик пуласси пирки шухăшлать Тимофей. Тĕлĕкре те вĕçет вăл. Ĕнтĕ кун пирки ачасем те, вĕрентекенсем те тата ыттисем те – пурте пĕлчĕç. Шкул библиотекăрĕ те унăн ĕмĕтне тĕшмĕртет. Кĕнеке илме пырсан, вăл ун çине ăшшăн пăхса йăл кулать.

– Эсĕ, Тимофей, летчиксем çинчен çырнă кĕнеке илесшĕн-и? – кăсăклапа самантрах.

Кĕнекене сумкине чикет те килелле васкать арçын ача. «Тӳсме хĕн. Хăвăртрах вулама ларас килет. Анчах чăтмалла. Йĕрке. Летчикăн çирĕп кăмăлне хăнăхмалла. Киле парса янă уроксене хатĕрлемесĕр кĕнекене алла тытмастăпах. Манăн малашне те питĕ лайăх вĕренмелле-çке. Çапах та Мересьев летчик пултарулăхĕнчен тĕлĕнетĕп. Эх!.. Пуласчĕ манăн та ун евĕр паттăр. Вĕçесчĕ! Кайăкран та çӳлерех, хăвăртрах! Ял-ял урлă, хуласем, вăрмансемпе шыв-шурсем, кӳлĕсемпе тинĕссем çийĕн вĕçесчĕ!» – шав ĕмĕтленсе утать Тимофей.

Е тата çуллахи кану кунĕсем куçĕ умне тухрĕç те – йăл кулчĕ тути, куçĕсем çуталчĕç. Хăвăрт уттине те самантрах чакарчĕ. «Ун чухне çӳл тӳперен сарă хĕвел пăхĕ, эпир вара ăшă шывра хавассăн чăмпăлтатăпăр. Хаваслă ача-пăча сасси тавралăха янăратĕ. Аслисен кăмăлне хăпартлантарăпăр. Атте-аннене те пулăшма манмăпăр паллах. «Ĕç çынна илем кӳрет» е «Куç хăрать те ал тăвать» йышши каларăшсем пирĕн çемьешĕн пĕрре те ют мар. Ывăнса вырăн çине тӳнсен те, пурпĕрех ыйха путиччен кĕнеке вуласа чуна лăплантаратăпах. Е тата альбом листи çине тавралăх илемне те сăнлатăп», – тесе тавралăхпа киленсе те хавхаланса пычĕ Тимофей.

### Архип — ĕмĕтлĕ, Сусанна — çунатлă

Пĕрремĕш класра вĕренекен Архип вара фермер пуласшăн, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетесшĕн.

– Тутлă та кăпăклă, сывлăхшăн усăллă сĕт паракан ĕнесене, шăрăх çанталăкра сулхăна пытанакан сурăхсене, симĕс курăк тăрăх чупма кăмăллакан чăх-чĕпе, утă-улăм турттарса пулăшакан лашасене тата ытти выльăх-чĕрлĕхе чунтан юрататăп. Вĕсемсĕр пурнăç питĕ тунсăх-çке. Килте те авă шкултан таврăнсанах картише васкатăп. Урама выляма тухсан та çул айккинче çӳрекен чăх-чĕпе ытарайми пăхатăп. Хĕвел питтинче питне çăвакан кушака, хапха айĕнчен урамалла пăхакан йытă та çывăх маншăн, – мăн çын евĕр пуплет Архип.

Шурă хут çине те тăтăш выльăх-чĕрлĕх ӳкерет, пластилинран те çавнашкал кĕлеткесем ăсталать.

...Пĕлтĕр вара пĕрремĕш класа çӳрекен Сусанна Егорова шкулта иртнĕ «Чăваш пики» конкурса кăмăлтан хутшăннă. Хăйĕнчен темиçе çул аслăрах 8-9-мĕш класс хĕрĕсене хыçа хăварса пĕрремĕш вырăна тухнă хастарскер. Пултарулăхĕпе пурне те савăнтарнă çеç мар, тĕлĕнтернĕ те.

– Егоровсен кашни ачи – ахах пĕрчи. Ашшĕ-амăшĕ тĕрĕс воспитани парса ӳстерет. Вĕсен тĕпренчĕкĕсене пурте юратаççĕ, ырлаççĕ. Эпир те хамăрăн вĕренекенсемпе чунтанах мăнаçланатпăр, – тенĕ педагогсем Сусаннăна çĕнтерӳ ячĕпе саламласа.

Кĕçех хĕрача иккĕмĕш класран вĕренсе тухать. Пĕтĕм йыш, тус-тантăш унпа мухтанать, ун пек пулма ăнтăлать.

### Наташа — çĕнтерӳçĕ, Антон — тавçăруллă

Наташа чăваш чĕлхипе литературине чунтан кăмăллать. «Шевле», «Çăлтăрчăк», «Чĕвĕлти чĕкеç» конкурс çĕнтерӳçи вăл. Ытти предметсем те уншăн ют мар. Тус-юлташне нихăçан та йывăрлăхра пăрахмасть. Йывăр лару-тăрăва кĕрсе ӳкекене яланах хапăлласа пулăшать.

– «Çынна ырă туни, ырăпах таврăнать», – тенине асрах тытатăп. Çавăнпа та кашни çыннăн çакна тĕпе хурса пурăнмалла, – çирĕплетет çиччĕмĕш класра вĕренекен Наташа сăпайлăн çеç.

Спорт та уншăн хăйне евĕр иленĕç. Ку енĕпе те мĕн чухлĕ çитĕнӳ туманши вăл? Грамотисемпе дипломĕсене шутласа пĕтерме те çук. Пиллĕкмĕш класри Антон шăллĕн те çавах. Çитĕнӳ хыççăн çитĕнӳ тăвать спортра. Вĕренӳре те вĕçĕмсĕр шав малалла ăнтăлать, унăн дневникне «5» паллăсем çеç илем кӳреççĕ.

Çапла, шкулта уяв-концерт-и, районта е республикăра спорт ăмăртăвĕ-и, олимпиада-конкурс-и – яланах Егоровсен тавçăруллă та аслă ачисем хутшăнаççĕ. Хутшăнаççĕ те шкул чысне çӳлте тытаççĕ.

...Пурте сĕтел хушшинче. Шăкăлшăкăл сăмах вакланать апат çинĕ май. Егоровсен сатур ачисене пула кил ăшчикки те хĕвел пек çуталса тăрать. Пурин те кăмăлĕсем савăк. Кĕçĕннисем Марфа, Петя, Клариса пиччĕшĕсемпе аппăшĕсем шкултан таврăннăшăн уйрăмах хĕпĕртерĕç. Ара, пĕчĕкскерсем вĕсемшĕн кунĕпе чунтан тунсăхлаççĕ-çке.

Вăрмар районĕ,
Аслă Чак.

ЧР ПУÇЛĂХĔН СТИПЕНДИАЧĔ

# Наянлăха çĕнтермелле те çитĕнӳ тумалла!

Дима вун пĕрмĕш класра вĕренет, шкулти хаваслăхпа сыв пуллашиччен вăхăт нумай та юлмарĕ. Çапах та халĕ канăç паман тĕп шухăш – патшалăх экзаменĕсене ăнăçлă тытасси. Вĕренӳре аван ĕлкĕрсе пырать пулин те мĕн пĕлнине кăна шанса лармасть вăл, кĕнеке тытса тата тĕплĕнрех хатĕрленет.

Шкул пурнăçĕ вĕренӳпе кăна иртмест-çке. Кунта тĕрлĕрен мероприятие хутшăнни те, пултарулăха аталантарни те пĕлтерĕшлĕ. Мĕншĕн тесен шкул чĕлхене е математикăна /çавăн пекех ытти предмета та/ кăна вĕрентмест, вăл пире пурнăçра хамăр вырăна тупма пулăшать. Хастарлăхпа палăракан ачан вара малашлăхĕ пысăк, йывăрлăхсен умне лексен те çухалса каймĕ вăл.

Дима та шкул пурнăçне хастар хутшăнать. Хоккейла выляма ăста. Унăн команди пĕлтĕр районта иккĕмĕш вырăн çĕнсе илнĕ. Пăшалтан пересси пе те час-часах мала тухать арçын ача.

«Зарницăпа» «Орленок» вăййисене хутшăннă чухне Димăна кашнинчех командир пулма суйлаççĕ. Пĕлтĕр вĕсен команди районта пĕрремĕш, республикăра иккĕмĕш вырăн йышăннă.

– Пĕчĕкренпех спортпа туслă эпĕ, пиччерен юлас килменнипех ун хыççăн тапаçланаттăм, – тет Дима сăпайлăн.

Предмет олимпиадисенче çулсеренех палăрать вăл. Районта кăçал ОБЖпа тата физкультурăпа пĕрремĕш вырăна тухнă. Туртăм пурри яланах малалла ăнтăлма пулăшать ăна.

Дима – республика Пуçлăхĕн стипендиачĕ. Çакна пурте тивĕçеймеççĕ. Апла арçын ачан ăнăçăвĕ мĕнре-ши?

– Стипендиат пулма нумай тăрăшмалла: спортпа туслă пулмалла, лайăх вĕренмелле, наянлăха çĕнтермелле те çитĕнӳ хыççăн çитĕнӳ тумалла, – пулчĕ хурав.

Дима çар çынни пулма ĕмĕтленет. Тăван çĕршыва хӳтĕлесси – унăн пурнăç тĕллевĕ. Мĕн пĕчĕкрен патриотла кинофильмсем пăхать.

– Кĕскен каласан, çар романтизмĕпе «чирлетĕп», – тет вăл шӳтле-шӳтле.

Пĕчĕк шăллĕ те унран вĕренсе пырать пулмалла, халех ăслă калаçма хăтланать. Паллах, юратать вăл пиччĕшне, çавăнпа ăна евĕрлеме хăтланать. Акă футболла тата волейболла выляма та хăнăхрĕ-ха. Ырра вĕрентекен пиччĕшĕнчен тĕслĕх илсен, тен, пурăна киле вăл та сумлă стипендие тивĕçĕ.

*Лариса ПЕТРОВА.*

Канаш районĕ,
Шуркасси.



**Кашни шкул хăйĕн пултаруллă вĕренекенĕсемпе мăнаçланать, вĕсен çутă пуласлăхне ĕненет. Канаш районĕнчи Шуркассинче те çавăн пек маттур ачасем пур. Вĕсенчен пĕри – Дима Максимов.**

КĔСКЕН

## Министерствăри экскурси



Чăваш Республикин Шалти Ĕçсен министерствин кун-çулĕпе паллашас тĕллевпе Шупашкарти транспортпа строительство технологийĕсен техникумĕнче вĕренекен 2ТОРАТ 01-04 ушкăн студенчĕсем ШĔМ историйĕн музейĕнче экскурсире пулса курчĕç. Ăна министерствăн культура центрĕн пуçлăхĕ Вячеслав Анатольевич Селиванов ертсе пычĕ.

Студентсем унта Чăваш Ен полицийĕн кун-çулĕ, çак профессире тăрăшакансен ĕçĕ-хĕлĕ çинчен нумай пĕлчĕç. Паттăрла ĕç тунисене, çынсене хӳтĕлесе пуç хунисене халалланă стендпа паллашрĕç.

Вĕренекенсем экскурсипе кăмăллă юлчĕç.

## Малашне те тирпей хуçаланĕ

Студентсен 1-мĕш общежитийĕнче пурăнакан çамрăксем субботника хутшăнса тавралăха тирпейилем кĕртрĕç. Ăна В.И. Егорова воспитатель йĕркелерĕ. Яшсемпе хĕрсем пĕр чăмăр пулса туслăн ĕçлерĕç. Сехет ытла уçă сывлăшра пулнă вăхăт сисĕнмесĕрех иртрĕ. Çуркуннехи ăшă çанталăк, янкăр тӳпе, уçă çил те тăрăшса тирпейлеме хавхалантарчĕ ахăртнех пире. Санитар комиссийĕн ертӳçи Виктория Краснова студентсем кун йышши мероприятисене кашнинчех хастар хутшăннине палăртрĕ. Малашне кашни эрнерех общежити таврашне тасатса тирпейлеме шут тытнине те пĕлтерчĕ.



*Вика КРАСНОВА,*
*«Çамрăк журналист» кружок членĕ.*

## Шухăшлаттаракан кинофильм

2ТОРАТ 01-14 студентсен ушкăнĕ Н.А. Андреева кураторпа тата В.И. Егоровăпа Чăваш Ен электрон кинодокументацийĕн архивĕнче пулчĕç, экологи темине çутатакан «Тăван тавралăх» кинофильм пăхрĕç. Мероприяти «Шанчăк меридианĕ» Пĕтĕм Раççейри VI экологи кинофестивалĕпе килĕшӳллĕн иртрĕ.

Раççей кино ăстисемпе çамрăк кинематографистсем ӳкернĕ фильмсенче çут çанталăкпа экологи темине туллин уçса панă. Студентсем ку енĕпе хатĕрленĕ чи лайăх документлă фильмсем курчĕç.

Кинокартинăсенчи географи те анлă, ку çĕршыври тĕрлĕ регионти экологипе çыхăннă çивĕч лару-тăру çинчен шухăшлаттарать. Темăна уçăмлатакан фильмсем çынсене çут çанталăка упрама, унăн пуянлăхĕпе перекетлĕ усă курма хистĕç.



*Надежда АНДРЕЕВА,*
*Валентина ЕГОРОВА.*
*Шупашкарти транспортпа строительство технологийĕсен техникумĕ.*

Тантăш
17 №, 2016, çу, 5



ПĔТĔМЛЕТŸ

# «Çĕнĕ ятсем уçатпăр»



**Çамрăк авторсен литература пултарулăхĕн «Çĕнĕ ятсем уçатпăр» /Открываем новые имена/ республика конкурсĕн пĕтĕмлетĕвĕсем хатĕр. Хальхинче вăл улттăмĕш хут иртрĕ, ăна чăваш литературин классикĕ К.В.Иванов çуралнăранпа 125 çул çитнине халалланă.**

Конкурса республикăри 13 районтан тата 3 хуларан пурĕ 44 çын, ытларах шкул ачисемпе студентсем хутшăннă. Ĕçлекен çамрăксен пултарулăх ĕçĕсем – сахалрах. Хĕрсем хастартарах пулнине палăртмалла.

Конкурс виçĕ номинаципе иртрĕ: проза, поэзи тата драматурги. Кашни номинацирех вырăсла тата чăвашла ĕçсене уйрăмшар пăхса тухнă. Пурĕ 53 ĕç: вĕсенчен 16 – чăвашла, 37 – вырăсла. Поэзи жанрĕпе хутшăнма кăмăл тунисем проза жанрне суйланисенчен ытларах. Драматургипе вара пĕр ĕç те килмен.

**«Проза» номинаци çĕнтерӳçисем:**

**вырăсла:**

1 вырăн – Валерия Алексеевна АЛЕКСЕЕВА «Научи меня любить»;

2 вырăн – Анастасия Юрьевна ДАНИЛОВА «Детство Ромки»;

2 вырăн – Илемби Петровна СТЕПАНОВА «Исповедь маленького существа»;

3 вырăн – Анна Николаевна СЕРГЕЕВА /АЛКОНОСТ/ «Здравствуйте, не желаете ли купить шарик»;

**чăвашла:**

1 вырăн – Ольга Михайловна АВСТРИЙСКАЯ /ИВАНОВА/ «Чăлах пуканесем»;

2 вырăн – Екатерина Александровна КОШЕЛЕВА «Вăрманти тĕлпулу»;

3 вырăн – Инесса Николаевна ШАШКИНА «Икĕ тĕнче хушшинче».

**«Поэзи» номинаци çĕнтерӳçисем:**

**вырăсла:**

1 вырăн – Андрей Олегович ЛЕНКИН;

2 вырăн – Ольга Михайловна АВСТРИЙСКАЯ /ИВАНОВА/;

3 вырăн – Диана Арнольдовна МОИСЕЕВА;

**чăвашла:**

1 вырăн – Лариса Николаевна ПЕТРОВА;

2 вырăн – Диана Арнольдовна МОИСЕЕВА;

3 вырăн – Ольга Анатольевна АЛЕКСАНДРОВА.

**Çу уйăхĕн 27-мĕшĕнче 11 сехетре** Республикăри ачасемпе çамрăксен библиотекинче çамрăк авторсен литература пултарулăхĕн «Çĕнĕ ятсем уçатпăр» /Открываем новые имена/ республика конкурсĕн çĕнтерӳçисен тата хутшăнаканĕсен чыславĕ иртет.

Конкурса тăратнă чи лайăх хайлавсене «Çамрăксен хаçачĕ» тата «Тантăш» хаçатсенче, «Самант», «Тăван Атăл» тата «ЛИК» журналсенче пичетлĕç, çавăн пекех «Çĕнĕ ятсем уçатпăр» /Открываем новые имена/ литература сборникĕн пиллĕкмĕш кăларăмне кĕртĕç.

Ыйтса пĕлмелли телефон: **52-37-22.**

***Татьяна ЗАХАРОВА,***
***ЧР ачасемпе çамрăксен библиотекин таврапĕлӳпе наци литератури пайĕн тĕп библиографĕ.***

# Пит-куçра яланах йăлтăр кулă пултăрччĕ

Унра ӳкерес ăсталăх вышкайсăр пысăк. Кăмăл хавас чухне вара ӳкерет те, ӳкерет. Улми йывăççинчен аякка ӳкмест тени шăп та шай Лебедевсем пирки калаăнах туйăнать. Улттăмĕш класра вĕренекен Вадим Лебедев каснă лартнă ашшĕ-çке.

– Атте те, унăн пĕртăванĕсем те ӳкерме ăста. Вĕсене кура хам та пĕчĕклех алла кăранташ тытрăм. Пултарулăхăма тата та малалла аталантарас канăç памасть халĕ мана, – ăнлантарать Вадим.

Улатăр районĕнчи Кивĕ Эйпеç шкулĕн 6-мĕш класĕнче вĕренекен арçын ачан паянхи ĕмĕчĕ – çуллахи каникула çывхартасси.

– Халĕ эпир тăрăшсах пысăк уява хатĕрленетпĕр. Аслă Çĕнтерĕве кăçал 71 çул пулать-çке. Пире телейлĕ пурнăç туса парасшăн пуç хунă совет салтакĕсене халалласа лартнă палăк умне пуçтарăнăпăр кăçал та. Унта эпир кашни çуркунне чечек лартатпăр, çу каçипех çав чăлтăркка чечексене юратса, шăварса тăратпăр. Тĕнчери мĕн пур ачан яланах пурнăçĕ çак çеçкесем пек илемлĕ çеç пултăрччĕ. Вăрçăн сиенлĕ ахрăмĕ пирки кĕнекерен, тĕрлĕ киносенчен пĕлетĕп. Валентина Эльбин «Аякри йăмăк» калавне те чуна ыраттармасăр вулаймăн. Арçын ача амăшне ак çапларах ыйтусемпе канăçсăрлантарать. «Анне, анне, каласа парсам атте çинчен. Ăна эпĕ пĕрре те курман-çке, – йăлăнать арçын ача. «Телей пулмарĕ çав, ачам. Вăрçăран таврăнса, хăй ачине пăхса ӳстермелле пулмарĕ унăн. Пĕтерчĕç çав нимĕç фашисчĕсем, пĕтĕм савăнăçа татрĕç. Шăп вăрçă чарăнас умĕн Берлинра пуç хучĕ. Кашни çырурах: «Ывăла лайăх пăхса çитĕнтер», – тетчĕ. Эх, питĕ юрататчĕ те çав сана аçу», – куççульне хытарса калаçать амăшĕ... Арçын ача каллех шухăша путать. «...Чи çывăх тусăмăн Тольăн ашшĕ çав тери ырă кăмăллă. Эпĕ те ăна юрататăп. Вăл пирĕнпе пĕчĕк ача пекех вылять, шӳтлĕ сăмахсемпе култарать. Манăн атте вăрçăран таврăннă пулсан-и, эпĕ те унран пĕр шит те юлас çукчĕ... Ку таранччен те: «Атте!» – тесе чĕнсен хирĕç никам та сас панине илтмен эпĕ, – тет ассăн сывласа.

Çапла, кунашкал йĕркесене пăлханмасăр, куççульсĕр ниепле те вулаймастăн. Ылханлă вăрçă мĕн чухлĕ ачана тăлăх хăварни чуна шĕкĕ евĕр кăшлать. Çавăнпа та, паянхи ăрăвăн унашкал хăрушă вăрçă курмалла ан пултăрччĕ. Тĕнчере яланах туслăх хуçалантăрччĕ, кашнин пит-куçĕнче йăлтăр кулă пултăрччĕ, куллен-кун ир-ирех тӳпене сарă хĕвел шуса тухтăрччĕ. Вара эпир те, шкул ачисем, пурнăçра чылай çитĕнӳ тăвăпăр. Пурнăçăн анлă сукмакĕпе сулмаклăн çеç утăпăр, – тет Вадим.

***Луиза ВАСИЛЬЕВА.***
Улатăр районĕ, Кивĕ Эйпеç.




# «Çар открытки» акцие хутшăнăр!




**Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче фашистла Германие çĕнтернĕренпе 71 çул çитнине халалласа республикăри ачасемпе çамрăксен библиотеки ака уйăхĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа çу уйăхĕн 9-мĕшĕччен «Çар открытки» акциирттерет.**

Кăмăл тăвакансем пурте акцие хутшăнма пултараççĕ. Çакна валли хăвăр алăпа уяв открытки хатĕрлемелле те вырăнти ача-пăча библиотекине илсе пымалла. Открытка питне кирек хăш технологие /ӳкерчĕк, аппликаци, калăпăшлă ӳкерчĕк тата ытти те/ пăхăнса А5 форматпа ăсталама юрать. Открыткăн тепĕр енче ветерана халалласа алăпа салам тексчĕ çырмалла; çавăн пекех хăвăр хушамата, ята, миçе çултине тата ăçта пурăннине палăртмалла.

Чи лайăх открыткăсемпе вăрçă ветеранĕсене тата тыл ĕçченĕсене уяв мероприятийĕсен вăхăтĕнче библиотекăсенче е киле пырса саламлĕç.

Шупашкарта пурăнакансем ăсталанă открыткăсене çу уйăхĕн 8-мĕшĕччен республикăри ачасемпе çамрăксен библиотекинчи таврапĕлӳпе наци литературин уйрăмĕнче çак адреспа йышăнаççĕ: **Шупашкар, И.Яковлев проспекчĕ, 8а çурт.**

Ыйтса пĕлмелли телефонсем: **/8352/52-37-22 /Татьяна Федоровна Захарова/, 52-02-00 /Татьяна Николаевна Миронова/.**

# Компьютер вăййисем ăçта илсе çитерĕççĕ?



**Халĕ килте компьютер пуррипе никама та тĕлĕнтерейменĕ. Аслисене вăл ĕç валли е пĕр-пĕр фильм пăхма, Интернетра юлташĕсемпе е ĕçтешĕсемпе хутшăнма кирлĕ. Ачасем вара хальхи технологисемпе вăйă выляса вăхăт ирттерĕççĕ. Çапла майпа шăпăрлансем вăйă аваăрне кĕрсе ӳкме пултарĕç, йĕри-тавра мĕн пулса иртнине асăрхама пăрахĕç, юлташсемпе чĕрĕлле хутшăниччен монитор умне ларма кăмăл тăвĕç.**

Анчах тепĕр чухне компьютер вăййисене пула ачасем уроксене сиктернĕ самантсем те пур. «Пемелли» пĕр-пĕр вăйăра çĕнĕ шая хăпарассишĕн ирчченех çывăрмаççĕ. Çавăнпа та, паллах, урок вĕренме вăхăт юлмасть. Çапла вара мĕн пĕчĕкрен вĕсем виртуаллă тĕнчере ӳсеççĕ.

Компьютер вăййисем пĕр-пĕринчен пахалăхĕпе çеç мар, жанрĕпе те уйрăлса тăраççĕ. Аркада ушкăнне кĕрекеннисем ансатрах, çавăнпа вĕсем питех те хăрушă мар – шăпăрланăн ачалăхĕнчи ырă вăхăтсене кăна туртса илеççĕ. Часах йăлăхтараççĕ вĕсем, çавă лайăх та. Сăнарлă вăйăсем хăрушăрах. Мĕншĕн тесен вĕсемпе кăсăкланакан ача хăйне çав сăнар пек туйма пуçлать, чăн пурнăçа асăрхама пăрахать. «Пемелли» вăйăсем вара шăпăрланăн психикине сиенлĕ витĕм кӳреççĕ. Мĕншĕн тесен кунти сюжет çынна хĕсĕрлеипе çыхăннă. Черетлĕ хирĕç тăракана «вĕлернĕ» май ача мĕн ыррине вĕренет-ши, характерăн хăш енĕсене аталантарать? Тарăху, агресси, теприне вăйпа пăхăнтарасси – çапла çын пултарса ӳстересшĕн-ши пĕчĕккере ашшĕ-амăшĕ тата патшалăх?

«Тантăш» вулаканĕсем компьютер тата вăйăсем пирки мĕн шухăшлаççĕ-ши?

**Наташа, 14 çулта:**

– Килте компьютер пур-ха, анчах ун умне сайра-хутра çеç ларатăп. Вăл мана реферат хатĕрлеме, тĕрлĕ конкурса хатĕрленме çеç кирлĕ.

**Олег, 17 çулта:**

– Икĕ кунта пĕрре /пĕр-икĕ сехет/ компьютер умне ларатăп. Интернетра хама кирлĕ информаци шыратăп.

**Анастасия, 13 çулта:**

– Компьютер умĕнче пулни мана 20 минут та çителĕклĕ, вĕренӳпе çыхăннă ĕçсем валли çеç кирлĕ вăл мана.

**Мария, 11 çулта:**

– Манăн компьютер пур. Эпĕ ун умне час-часах ларатăп, тĕрлĕ вăйă выляма юрататăп. Ирхине 2-3 сехет, каçхине 1-2 сехет вылятăп, унсăр пуçне телефонпа та пĕр сехет çапла ирттеретĕп.

**Дима, 15 çулта:**

– Килте компьютер çук. Смартфонпа тĕрлĕрен вăйă вылятăп: «Танки», «Стратегия» тата «Гонки». Вĕсем вăхăта ытлах илмеççĕ, эпĕ унта самантлăха кăна кĕрсе тухатăп. Халĕ манăн вĕренмелле-ха, экзамена хатĕрленмелле. Çавăнпа Интернетра онлайн-тест ыйтăвĕсене хуравласа хамăн пĕлĕве тĕрĕслетĕп.

Чун киленĕçĕпе /ӳкерессi, вуласси, çырасси, алă ĕçĕпе аппаланасси е чечексемпе ĕçлесси/ пурăнма пĕлекене, паллах, çавăн йышши чунсăр вăйăсем кăсăклантараймаççĕ. Анчах компьютер е телефон вăййисĕр пĕр кун та пурăнайманнисен асăрханулă пулмалла, мĕншĕн тесен çав «шурлăха» пĕрре лексен вăл шаларах та шаларах туртса кĕртет. Пирĕн вара аталанмалла, нумай пĕлме тăрăшмалла, кĕлеткепе кăна мар, ăс-тăнпа та çитĕнмелле. Виртуаллă тĕнчере пурнăç илемĕ курăнмасть, унта чылай ларсан хăрушă фильмсенчи зомби евĕрех пулса кайăн.

# Мĕнле çинине сăна та кăмăлне пĕл



Пирĕнтен кашниех апат çинĕ чухне хăйне евĕрлĕхпе палăрать, çакă характера кăтартса парать. Хамăр çинчен лайăх шухăшлаттарас тесе эпир сĕтел хушшине ларсан ятарлă этикета пăхăнма тăрăшатпăр. Анчах этем кăмăлне, çакна вăл ятарласа вĕренмен пулсан, нимĕнпе те пытараймăн.

**Васкамасăр çиекен** пурнăç çирĕплĕхне кăмăллать. Хăйĕн шухăшне хӳтĕлеме пĕлет вăл. Хăрушлăх кăларса тăратакан пулăмсене юратмасть, пачах тепĕр май, кашни çитĕнӳпе киленет. Апат çини уншăн – лăпкăлăхпа канăç тата савăнăç илмелли меслет, урăхла – релаксаци. Кун пек çынсемпе асăрханулă пулмалла, мĕншĕн тесен вĕсем малта пыма юратаççĕ, хăйсен тĕллевĕсене пурнăçлама ыттисен вăй-халĕпе усă кураççĕ.

**Хăвăрт çиекен** çын питĕ çаврăнăçулă, анчах хăйне пур чухне те лăпкă тытаймасть. Унăн тĕллĕн палăртнă шухăш çук, тавраri çынсен витĕмĕпе е пурнăç пулăмĕсене кура тĕллевĕсем улшăнма пултараççĕ. Кирек епле лару-тăрăва та çăмăллăн хăнăхать, йывăр ĕçе пуринчен те лайăх пурнăçлать.

**Суйласа çиекен** вара хуть те мĕнле ĕçе пуçăнсан та хăйĕн яваплăхне пĕлет. Мĕн те пулин килĕшсе тăманнине туйсанах çакă уншăн пысăк йывăрлăх кăларать.

Çывăх çынсене лайăхрах сăнăр та вĕсем çинчен ытларах пĕлме пуçлатăр.



# Чи пĕчĕк баскетболист

Наци Баскетбол Лигинчи чи пĕчĕк баскетболист – Эрл Бойкинс. Унăн çӳллĕшĕ – 160 сантиметр, йывăрăшĕ – 60 килограмм.

Спортсмен 1976 çулхи çĕртме уйăхĕн 2-мĕшĕнче Кливленд хулинче /АПШ/ çуралнă. Ачаранпах баскетболпа туслă, Кливлендри католиксен тĕп вăтам шкулĕнче вĕреннĕ май унти командăра выляна. Шкул хыççăн Тухăç Мичиган университетне çӳреме тытăнсан унăн командине лекнĕ. Кăтартăвĕсем ăнăçлă пулнă.

# Тĕнчери чи пысăк ăмăрткайăк

Паянхи куна тĕнчери чи пысăк тата вăйлă ăмăрткайăк – упăтесемпе тăранакан гарпия /е филиппин гарпии/. Вăл питĕ сайра тĕл пулать, çавăнпа та Филиппинра ăна вĕлернĕшĕн 12 çуллăха тĕрмене хупаççĕ.

Пысăк кайăкăн кĕлетки вăрăмăшĕ – 1 метр, çуначĕсен сарлакăшĕ 220 сантиметра çитет. Гарпия аçин йывăрăшĕ – 4-6 килограмм, амин вара ытларах – 5-8 килограмран та иртет. Çуначĕсем хăмăр тĕслĕ, хĕррипе – çутăрах. Хырăмĕ – çутă, пуçĕ – хăмăртарах. Хальхи вăхăта гарпия 400 кайăкран ытла мар, тен, чылай сахалрах сыхланса юлнă.

Çак кайăк утмăл çула яхăн пурăнать. Ун çинчен пуçласа 1896 çулта çырнă, анчах йăвине пĕрремĕш хут 1963 çулта çеç, диптерокарп çемйине кĕрекен йывăç çинче вăтăр метр çӳллĕшĕнче тупнă. Гарпия пĕр çăмарта кăна пусса кăларать. Кайăксем чĕппине темиçе çул хушши пăхса пурăнаççĕ.

Чи пысăк ăмăрткайăк чĕрчунсемпе, çĕлен-калтапа тăранать, ытти тискер кайăка та тиркемест. Часчасах упăтесене тапăнать.

# Мотоцикл несĕлĕ



Паянхи мотоциклăн несĕлĕ вун тăххăрмĕш ĕмĕр пуçламăшĕнчех «пурăннă». Унăн двигателĕ, паллах, пăспа ĕçленĕ. «Шалта çунакан чĕрелле» /ДВС/ мотоцикла вара 1885 çулта патентланă. Ăна пуçтараканĕ – Готлиб Даймлер конструктор. Никĕсĕнче çур ĕмĕр малarах Франци дворянинĕ де Сирвак йывăçран ăсталанă велосипед пулнă. Мотоцикл йывăç рамăран, пĕр цилиндртан тăнă. Урапа шăлĕсене те йывăçран тунă, кăшкарне – тимĕртен. Сехетре 12 çухрăм кайнă вăл. 50 килограмм йывăрăш тайнă.



# Вăрçă калавĕсем

Александр ИЛЬИН

## Çапăçать Сталинград

Тăшман Сталинграда парăнтарма шухăшларĕ.Васкать часрах хулана илме.

Çĕр çинче – танкĕсемпе тупписем, тӳпере – самолечĕсем.

– Çуллах илетпĕр, – терĕç,
Илеймерĕç. Çапăçать Сталинград.
– Кĕркуннепе илетпĕрех, – терĕç.
Илеймерĕç. Çапăçать Сталинград.
– Хĕл ларсанах Сталинград парăнать, – терĕç.
Парăнмарĕ. Çапăçать Сталинград.

Совет салтакĕсем тăшмана хăйне Сталинград çывăхĕнче парăнтарма хатĕрленчĕç.

Çĕр çинче – танкĕсемпе тупписем, тӳпере – самолечĕсем.

Хĕрӳ çапăçусем пуçланчĕç.

Тăшман пуçне çĕклеймест, куçне усаймасть: парăнаççĕ салтакĕсемпе офицерĕсем, парăнаççĕ генералĕсем…

Хаяр çапăçу тăшмана хăйне парăнтарнипе вĕçленчĕ.

«Çын валли шăтăк ан алт», – тенĕ авалтанах.

Тăшман пире валли алтнă шăтăка хăех кĕрсе ӳкрĕ.

Маттур Сталинград!
Паттăр Сталинград!

Чыс та мухтав Сталинград салтакĕсене!

Мухтав! Мухтав!

## «Чĕлхе» тытса килни

Çу касĕ. Уйрăмах вăл уяр çанталăкра илемлĕ. Лăпкă çил вĕрни, кайăксен юррисем, вăрçă пырать пулсан та, чуна çĕклеççĕ. Акă çăлтăрсем курăнса кайрĕç, уйăх та кĕттермерĕ… Çак самантра «чĕлхе» тытма тухрĕç разведчиксем, Вĕсем улттăн. Кашнийĕнех автомат, гранатăсем, пурте масхалатпа. Ушкăнра тĕрлĕ халăх çыннисем: вырăссем, украинецсем, белоруссем тата чăвашсем. Чăваш каччи – сапер. Разведчиксем «чĕлхе» тытма яланах саперсемпе пĕрле тухаççĕ. Тăшман территорине кĕрсе кайнăранпа вăхăт самаях иртрĕ. Часах çутăлма та пуçлать. Çавăнпа разведчиксен питех те васкамалла. Вĕсен темле пулсан та «чĕлхе» тытмалла-çкеха. Унсăр полка таврăнма юрамасть. Командирсем те ырламĕç. Юри тенĕнех пĕр тăшман салтакĕ те курăнмасть. Пурте пăшăрханма пуçларĕç. Разведчиксен ушкăнĕн командирĕ Иванов старшина. Вăл салтаксене:

– Акă мĕн тăвăпăр: куратăр-и, пирĕн умра çĕр çинче телефон пралукĕсем выртаççĕ, вĕсем – тăшманăн, мĕншĕн тесен çывăхра пирĕн çарсем çук. Çавăнпа та халь пралукне пĕр-икĕ çĕртен тататпăр та кĕтме пуçлатпăр. Тăшман связисчĕсем пралуксен татăлнă вырăна шыраса килеççĕ, – терĕ.

Разведчиксем пралуксене икĕ вырăнтан татрĕç те пысăк тĕмсем хыçне пытанса выртрĕç. Чылай кĕтрĕç тăшман салтакĕсене. Икĕ сехет те иртсе кайрĕ, анчах вĕсем çук та çук. Каллех пăшăрханма пуçларĕç: «чĕлхесĕрех» таврăнма тивет-ши? Çапла кăна шутланăччĕ – пăхаççĕ, инçех те мар вĕсен патнелле икĕ салтак утать. Старшина разведчиксене:

– Шăп пулăр, кусем – связистсем, пралуксем татăлнă вырăна шырама тухнă…

Старшина çапла каларĕ çеç, связистсем çитсе те тăчĕç. Шăпах пралуксем татăлнă вырăнта чарăнчĕç. Васкасах пралук вĕçĕсене сыпăнтарма пĕшкĕнчĕç. Çав вăхăтра ярса илчĕç те разведчиксем связистсене. Лешсем пĕр сăмах чĕнме те ĕлкĕреймерĕç.

Маттур разведчиксем! Маттур!

## Зенитчиксем

Хĕвеланăç чикки. Пĕр енче – Беларуç, тепĕр енче – Польша çĕрĕсем. Йĕритавраллах чăтлăх вăрман, уйсем, инçех те мар Вислочь ятлă пĕчĕк юханшыв. Çак илемлĕ вырăнта зенитчиксен дивизионĕ вырнаçнă. Командирĕ – Ильин капитан. Чăваш. Тул çутăлма пуçларĕ. Вăхăт тăватă сехет патнелле çывхарать, апла пулин те зенитчиксем çывăрмаççĕ, вĕсем тин кăна дивизире ирттернĕ çар вĕренĕвĕнчен таврăнчĕç. Кайăксем вăранма пуçларĕç. «Чĕвик! Чĕ-вик! Ши-ши!» – чĕвиклетеççĕ çунатлă юрăçсем. Зенитчиксемшĕн кун начар пуласси асра та çук. Тăватă сехетре тӳпере, хĕвеланăçра, самолетсем курăнса кайрĕç. Тăшман самолечĕсем. Вăтăр тăваттăн. Пĕр хăрамасăр çĕр çумĕнех вĕçеççĕ. Дивизион çинченех вĕçсе иртме пуçларĕç.

– Хамăртан култармастпăрах! – кăшкăрса ячĕç зенитчиксем. Ильин тăшман самолечĕсене персе антарма команда пачĕ. Кĕçех тăватă бомбардировщик таран çăра тĕтĕм йăсăрлантарса çĕрелле вирхĕнчĕ.

– Ура! Ура! – кăшкăраççĕ хавассăн зенитчиксем. Вĕсем пилĕк летчик парашютпа сикнине асăрхарĕç те часах пурне те штаба тытса пычĕç.

Летчиксенчен пĕри майор, бомбардировщиксен полкĕн командирĕ иккен. Вăл Ильина:

– Эпир Минск çине бомба пăрахма вĕçеттĕмĕр. Мĕншĕн пире персе антартăр? Халĕ кĕтсех тăрăр пирĕн «кучченеçе», – терĕ çеç, бомбардировщиксем дивизион çине «хурçă çумăр» тăкма та тытăнчĕç. Тăшман автоматчикĕсем те курăна пуçларĕç. Тан мар çапăçу касченех пычĕ. Вăл вĕçленнĕ тĕле виççĕр зенитчикран утмăлăн кăна тăрса юлчĕç. Чылайăшĕ аманнă. Дивизионра пĕр зенитка та юлмарĕ, ытти хĕç-пăшал та çукпа пĕрех. Пур çĕрте те вут-кăвар йăсăрланать. Зенитчиксем ушкăнăн-ушкăнăн Ильин патне пуçтарăнма пуçларĕç. Пурте пухăнса çитсен вăл юлташсене:

– Çурçĕрпе Минск еннелле тапранатпăр. Ирччен Волковыска çитмелле. Халь вара çула хатĕрленме пуçлар, – терĕ.

Зенитчиксем васкасах йывăр аманнисене йăтма наçилкkасем тума, пур-çук хĕç-пăшала йĕркене кĕртме тытăнчĕç.

Каçхи тӳпере йăл! кулакан уйăхпа çăлтăрсем кăна нимĕн те пулманнăн яланхи пекех хăйсен çуттине çĕр çине сапаларĕç.

– Ан пăшăрханăр, капитан юлташ, эпир çĕнтеретпĕр, – тенĕ пек туйăнчĕç вĕсен куллисем дивизион командирне…

## Вырмара

Иккĕмĕш çул хăрушă вăрçă кĕрлет. Çав кĕрлев пирĕн ялта та кашни кунах илтĕнсе тăрать. Аттесем вăрçă хирĕнче. Çавăнпа та пур ĕçе те хĕрарăмсемпе ватăсем тата эпир, ачасем, туса пыратпăр.

Çу кунĕсем пуçланчĕç. Ял халăхĕ уйра. Вырмара. Аслисемпе танах ачасем те тăрăшаççĕ. Петĕр çичĕ çулта кăна-ха, çапах та амăшĕпе пĕрле тырă вырма тухать. Вĕсем паян та иртенпех ана çинче. Кунтах Петĕр тантăшĕсем те: Васук, Сантăр, Микулай, Ванюк, Хĕветĕр. Хĕрачасем те кунтах. Кăнтăрла çитсен Петĕрпе амăшĕ çĕмел хӳттине сулхăна канма ларчĕç. Вĕсен патне амăшĕн тантăшĕсем Санькăпа Тарук аппасем пычĕç те, Тарук аппа Петĕре тӳрех:

– Петĕр, ах, тур-тур, сан çурăму çине куршанак çыпçăнса ларнă, кур-ха, кур! Питĕ нумай тата!

Арçын ача васкасах кĕпине хыврĕ те куршанак шырама пуçларĕ. Анчах тем пек шырасан та пĕр куршанака та тупаймарĕ.

– Çук-çке, çук куршанаксем. Ма суеçтерен, Тарук аппа? – терĕ Петĕр.

Хĕрарăмсем кулсах ячĕç. Ача ăнланмарĕ вĕсем мĕншĕн кулнине.

«Куршанак çыпçăннă тени ача ĕçе кӳлĕннине пĕлтерет, – тенĕ ватăсем ĕлĕкренех, – халь, Петĕр, эсĕ те ĕçе кӳлĕнтĕн, çавăнпа çапла каларăм та сана эпĕ», – терĕ ачана Тарук аппа.

Кăнтăрлахи кану вĕçленчĕ. Петĕрпе амăшĕ каллех тырă вырма пуçларĕç. Ача самантлăха тӳрленсе тăчĕ. Инçех мар выракан Микулай та кĕпине хывсах куршанак шыранине курчĕ те ăшшăн кулса ячĕ…

## Катюша

Кашни хĕç-пăшалăн хăйĕн сасси, янăравĕ. Самолет сывлăшра вĕçсе тавралăха янратать, танк – çĕр çинче, вăл кĕрлеме пуçласан çĕр чĕтрет. Халĕ те тавралăх янраса кайрĕ. Кĕрлет кăна. Камши янратаканĕ? Кам? «Катюша» иккен. Çапла ят панă çак хĕç-пăшала вăрçăра. Тăшман та питĕ лайăх пĕлет унăн ятне. Хăй вара «катюшăна» пĕрре те курман. Апла пулин те вăл унран темрен хăранă пек хăрать. Сассине илтсенех тарса пытанма васкать. «Пĕтрĕмĕр! Пĕтрĕмĕр!» – тесе кăшкăраççĕ çав самантра тăшман салтакĕсем. Анчах та «катюшăран» тарса пытанма май çук. Тăшмана вăл таçтан та шыраса тупать; тупсассăн ыррине ан кĕтĕр çичют çăхан. Туххăмрах леш тĕнчене ăсанать.

Вăрçăра тăшман салтакĕсене пуçласа «катюшăпа» «паллаштараканĕ» И.А.Флеров капитан пулнă. Çав «паллашу» 1941 çулхи июлĕн 14-мĕшĕнче 15 сехет те 15 минутра Орша хули çывăхĕнче пулса иртнĕ. Вăл фашистшăн питĕ хакла ларнă. Флеров ертсе пынă батарейăра ытти халăх çыннисемпе пĕрле чăваш салтакĕсем те тăшманпа паттăррăн çапăçни çинчен эпир халь те мухтанса аса илетпĕр.

Тавралăха «катюша» янратма пуçласан çĕр чĕтрет, тăшман сассăр, чĕлхесĕр пулса ларать.

Акă мĕнле хĕç-пăшал вăл «катюша» – Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче тăшмана хирĕç паттăррăн çапăçнă Хĕрлĕ Çар гварди миномечĕ!

## Парикмахер

Кĕрхи каç çывхарса килет. Вăрман хĕррипче пысăк çĕр пӳртре сасăсем илтĕнеççĕ. Кунта полкри разведчиксем вырнаçнă. Вĕсем вунпиллĕкĕн. Паян çĕрле ултă разведчикăн тăшман тылне «чĕлхе» тытма каймалла. Унччен салтаксем канаççĕ. Хăшĕ-пĕри çыру çырать, юрă юрлакансем те пур. Çак самантра çĕр пӳрте полк командирĕ Васильев майор кĕрсе тăчĕ. Старшинана курсанах:

– Смирно! – тесе команда пачĕ.

– Вольно! – терĕ полк командирĕ.

– Вольно! – терĕ старшина та.

Разведчиксем самантрах майор умĕнче тӳрленсе тăчĕç. Вăл вĕсем çине пăхса илчĕ те хыттăнах:

– Старшина! Камсем кусем? Çӳçĕсем вăрăмланса кайнă, сухалĕсене хырман! Разведчиксем полкра яланах чи типтерлĕ, маттур салтаксем пулнă. Вĕсенче – полк чысĕ! Полк чысĕ! Илтетĕн-и, старшина! Тепĕр сехет çурăран килетĕп тĕрĕслеме! – терĕ те çĕр пӳртрен тухрĕ Васильев майор.

Старшина майор тухсанах:

– Кам çӳç касма пĕлет? – тесе ыйтрĕ.

Пĕр разведчик та сăмах хушмарĕ.

– Апла, Васильчук ефрейтор, эсĕ пулăн паянлăха парикмахер, – терĕ старшина. Васильчук хăчă тытрĕ те Михайлов ефрейторăн çӳçне касма тытăнчĕ. Анчах та пĕр вунă минут пек ĕçлесен Васильчук старшинана:

– Пултараймастăп, – терĕ.

Разведчиксем Михайлов пуçĕ çине пăхса илчĕç те хыттăнах кулса ячĕç.

Старшина çӳç касма Павлов ефрейтора хушрĕ, анчах вăл та тепĕр самантранах:

– Старшина юлташ, манран та çӳç касасси пулмасть, – терĕ.

Мĕн тумалла? Старшина каллех разведчиксенчен:

– Кам çӳç касма пĕлет? – тесе ыйтрĕ.

Пурте шăпах. Унтан нимĕн тума пĕлмен старшина Иванов ефрейтора:

– Халех çӳç касма пуçла, – терĕ.

Василий Иванов хăчă илчĕ те ĕçе тытăнчĕ. Чăваш каччи чиперех çӳç касать иккен. Разведчиксем çакна курсан хĕпĕртесех кайрĕç. Старшинан та кăмăлĕ çĕкленчĕ. Пĕр сехет патне ĕçлесен Иванов пур разведчикăн çӳçне касса пĕтерчĕ. Сехет çурăран çĕр пӳрте Васильев майор кĕрсе тăчĕ. Старшина тӳрех:

– Смирно! – тесе команда пачĕ.

– Вольно! – терĕ майор.

Çӳçе йĕркеллĕ кастарнă, сухала чипер хырнă разведчиксем ун умĕнче тăраççĕ.

Майор çакна палăртса:

– Аван, аван, старшина, халь ман умра чăн-чăн разведчиксем. Малалла та ялан çапла пулăр, – тесе урама тухрĕ.

Çак самантран Василий Иванов разведчиксен парикмахерĕ пулса тăчĕ. Юлташĕсем вара шӳтлесе чăваш каччине «Парикмахер» тесе чĕнме пуçларĕç.

Ак çапла шӳтлĕ пулăм пулса иртрĕ пĕррехинче разведчиксен туслă йышĕнче.

Çапла, вăрçăра унсăрăн та пулмастех…

**(Малалли пулать).**

## Хăйăр юхать, сăмах тухать



1. Çар техники. 2. Авалхи грексен турри. 3. Авалхи хĕç-пăшал. 4. Арменири сăрт-ту. 5. Ту таки. 6. Бурят хресченĕ. 7. Пысăк попугай. 8. Авалхи Атăл. 9. Стена çинчи çутă. 10. Юрăхсăр тавар. 11. Вăхăтлăх пурăнмалли çурт. 12. Верещагин «карапĕ». 13. Тенор юлташĕ. 14. Ăна Дуремар пулăшнă. 15. Урамра купаланса тăракан ăпăр-тапăр.

## Сăмахкаçмăшсем



**Сылтăмалла:** 4. Авалхи скифсен хĕçĕ. 8. Пушă. 9. Тутлă шăршă. 10. Пушкăрт халăхĕн паттăр ывăлĕ. 11. Пĕр пек илтĕнекен сăмах. 12. Венесуэла çĕршывĕн тĕп хули. 14. Карапсем çуркунне ĕçе пуçăнни. 18. Авалхи япаласене пуçтаракан. 22. Хаклă йышши чул. 23. Ленин çуралнă уйăх. 24. Раççей кĕрешÿçи, виçĕ хут Олимп чемпионĕ. 25. Чăваш артисчĕ, режиссерĕ. 26. Вăл çĕршыв старости пулнă. 27. Вилĕмсĕр «Нарспи» авторĕ.

**Аялалла:** 1. Хурт-кăпшанкă. 2. Кăнтăрти йывăç. 3. Тĕвесен ушкăнĕ. 5. Вырăс историкĕ. 6. Узбекистанри хула. 7. Вăл Чулхулари хоккей командинче вылянă. 13. Ырă сунса каланă сăмах. 15. Унта канаççĕ те, сипленеççĕ те. 16. Çар званийĕ. 17. Мускаври пуян район. 19. Мăсăльмансен уйăхĕ. 20. Вырăс писателĕ. 21. Чăваш халăх артисчĕ – Кĕлпук мучи.

## Унталла та кунталла хуравсене тупмалла



**Сылтăмалла:** 3. Çар подразделенийĕ. 5. Ачан тепĕр амăшĕ. 7. Машина ячĕ. 11. Ĕç укçин пĕр пайĕ. 13. Хиппи юлташĕ. 14. Кинори йытă.

**А стрелка тăрăх:** 1. Электричество терминĕ. 4. Вăл костелта янăрать. 6. Тинĕсри пулă. 8. Куба çĕршывĕн тĕп хули. 10. Çĕпĕрти хула. 12. Хими элеменчĕ.

**Б стрелка тăрăх:** 2. Арçын ячĕ. 4. Канадăн тĕп хули. 6. Пальто. 8. Совет Союзĕнчи парти лидерĕ. 9. Кăнтăрти хула. 11. Чапаевăн харсăр пулеметчици.



**Сылтăмалла:** 5. Пĕвери пулă. 7. Икĕ вĕçлĕ япала. 9. Пĕчĕк кĕреçе. 11. Хаклă йышши чулсен виçи. 12. Бульба та, Шевченко та. 13. Пушă. 14. Шахмат вăййинчи трагикамит. 17. Ылтăн Урта пуçлăхĕ. 18. Кăнтăрти йывăç. 19. Тинĕсри чĕрчун. 21. Океанри «ишевçĕ». 22. Чăваш сăвăçи, хĕрарăм. 24. Цехри транспорт. 26. Турат çинчи «эреш». 27. Чăваш сăвăçи. 29. Утă-улăм купи. 30. Эсĕ ăна алра тытса ларатăн. 31. Уçланкăри ... /юрăран/. 33. Упăте апачĕ. 34. Çăмăл апат.

**Аялалла:** 1. Шакла кавир. 2. Саваламан ... 3. Темисе çулхи пăр. 4. Кăркăссен укçи. 6. Ĕпхÿри хоккей команди – "... Юлаев". 7. Авалхи хĕç. 8. Сÿпĕлти кайăк. 10. Самолетсем сĕкĕшни. 12. Хурт-кăпшанкă. 15. Суту-илÿ хатĕрĕ. 16. Тĕвесен ушкăнĕ. 17. Литература жанрĕ. 20. Юмахри ... -Барабас. 21. Раççейпе кÿршĕллĕ халăх. 23. Лаша уринчи «телей». 25. Утă хатĕрлемелли вырăн. 27. Шутсăр шултра калта. 28. Ĕç тумтирĕ. 31. Уйăрса панă татăк. 32. Тĕве тĕсĕ.

***Николай КРАСНОВ*** (Йĕпреç районĕ) ***хатĕрленĕ.***